**Мĕн-ши вăл Тăван çĕр-шыв?**

***(Сингапур технологийĕсене тĕпе хурса йĕркеленĕ урок)***

***З.Н. ЛУКИНА****, Шупашкарти 36-мĕш шкулта чăваш чĕлхипе литератури вĕрентекен,*

***И.В. СОРОКИНА****, Шупашкарти Кадет шкулĕнче чăваш чĕлхипе литератури вĕрентекен*

**Тĕллевпе тупсăм: «**Тăван çĕр-шыв» темăна уçса парасси.

**Моральпе этика:** Тăван çĕр-шыва юратма, ăна упрама вĕрентесси.

**Предметăн пĕрлĕхлĕ результачĕсен тĕллевĕсем:**

***1. Йĕркелӳ.*** Кирлĕ информацие вĕренӳ кĕнекинче шыраса тупма пултарни.

***2. Хутшăну.*** Тĕрлĕ мелпе мăшăррăн е ушкăнпа ĕçлесе информаци тупма пултарни.

***3. Информаци.*** Материала вуласа тишкерме, кирлине суйласа илме пултарни, ĕçре схемăсемпе, ятарлă паллăсемпе усă курма пĕлни.

**Предметăн ятарлă пĕлӳ илмелли тĕллевĕсем:**

***1. Вĕренекенсен пĕлӳ, пултару, хăнăху ĕçĕ-хĕлĕ.*** Блиц турти ыйтусем çине хуравлани.

***2. Вĕрентӳ хевти-талпăнăвĕ.*** Харпăр хăй кăмăлне палăртса ыйтусем çине хуравлама пултарни.

**Мелсемпе меслетсем:** кăмăл ситуацийĕ, учитель сăмахĕ, ыйту-хурав, шырав, тишкерӳ, пăхмасăр калани, кану саманчĕ, «Виççĕ–иккĕ–пĕрре», киле ĕç пани.

**У р о к ю х ă м ĕ**

Вĕренкенсем ушкăнăн-ушкăнăн ларса тухаççĕ, кашни ушкăнра тăватшар ача, кашни вĕренекенĕн хăйĕн номерĕ.

**I. Класа йĕркелени.**

В ĕ р е н т е к е н.

Пĕр-пĕрне алран тытса

Хыттăн-хыттăн чăмăртатпăр. *(1-мĕшпе 4-мĕш, 2-мĕшпе 3-мĕш номерлĕ ачасем пĕрне-пĕри ал тытаççĕ.       )*

Куçран пăхса, йăл кулса

Пĕр-пĕрне сывлăх сунатпăр. *(Пĕр-пĕрин çине пăхса сывлăх сунаççĕ.)*

В ĕ р е н т е к е н. Ырă кун пултăр, юратнă ачасем*! (Ачасем учителе сывлăх сунаççĕ. Парта хушшине вырнаçса лараççĕ.)*

Мĕн-ши вăл Тăван çĕр-шыв?

Аякра-ши, çывăх-ши?

Аякра та, çывăх та!

Каласа парам, тăхта!

**II. Ачасене хатĕрлени: темăна сӳтсе явмалли çивĕч ыйтăва пĕрле тупса палăртни.**

В ĕ р е н т е к е н *(презентаципе паллаштарнă май).*

Çакă-им çĕр-шывăмăр?

Çак та, çак кăна та мар…

Сарлака Россия-Русь!

Никама та çук чару:

Тĕрлĕрен чĕлхепеле

Юрă хур, вĕрен, пупле…

Çавă-ши çĕр-шывăмăр?

«Çавă!» – тетпĕр яланах.

**III. Системăллă пĕлӳпе ăнлавсене аса илсе пĕтĕмлетни, ăша хывни.**

***1. Экшен мелĕпе ĕçлени.***

Кашни ушкăнра 1-мĕш ыйтăва 1-мĕш номерлĕ ача хуравлать, 2-мĕш ыйтăва – 2-мĕш номерли (малалла та çаплах), тĕрĕс хурав экран çине тухса пырать. Çавăн пекех экран çинче таймер ĕçлет. Хурава шутламалли вăхăт – 10 çеккунт.

Блиц ыйтусем:

1. Чăваш халăхĕн мăн аслашшĕсем камсем пулнă? (*Чăвашсен мăн аслашшĕсем пăлхарсемпе суварсем пулнă. XVI ĕмĕрте вĕсем хăйсене чăваш теме пуçланă.*)

2. Шупашкар хули çинчен летопиçре миçемĕш çулта чи малтан асăннăши? (*1469 çулта.*)

3. Чăвашсем сума сăвакан йывăç. (*Юман. Унăн пĕлтерĕшĕ – вăй, çирĕплĕх, ĕмĕрлĕх.*)

4. Чăваш вăрманĕнчи чи пысăк чĕрчун. (*Пăши.*)

5. Чăваш Республикинче миçе хула? (*Тăхăр хула: Етĕрне, Канаш, Куславкка, Сĕнтĕрвăрри, Çĕмĕрле, Çĕнĕ Шупашкар, Çĕрпӳ, Улатăр, Шупашкар.*)

6. Республикăри чи çамрăк хула. (*Çĕнĕ Шупашкар.*)

7. Чăваш халăхне çутта кăлараканĕ. (*Иван Яковлевич Яковлев.*)

8. Чăваш Республикин гимне кам çырнă? (*Сăвви – Илле Тукташăн, кĕвви – Герман Лебедевăн.*)

9. Тĕнчипе паллă виççĕмĕш космонавт, чăвашсен пĕрремĕш космонавчĕ. (*Андриян Григорьевич Николаев.*)

10. Будайка салинче çуралнă Граждан вăрçин геройĕ. (*Василий Иванович Чапаев.*)

11. Чăваш Республикин Пуçлăхĕ. (*Михаил Васильевич Игнатьев.*)

***2. Ĕçе кал-кал йĕркелени.*** Ачасем шавласа кайсан учитель хăй суйласа илнĕ ритмпа алă çупать. Ачасен вара учитель хыççăн çакăн пек ритмпах алă çупмалла.

***3. Кану саманчĕ.*** «Шăнтса лартни» вăйă.

Чăваш кĕвви янăрать. Ачасем класра вырăнтан вырăна куçаççĕ. Кĕвĕ чарăнсан ачасен пĕр хускалмасăр тăмалла. Учитель ыйту парать, хуравĕнче пĕр-пĕр хисеп пулмалла. Ачасен ушкăнăн-ушкăнăн пуçтарăнса тăмалла. Кашни ушкăнри ачасен шучĕ хураври хисеппе тӳр килмелле. Кану саманчĕн асра тытмалли тĕп уйрăмлăх – хурава никамăн та сасăпа калама юраманни.

Ыйтусем:

1. Халĕ миçемĕш урок пырать?

2. Энере миçе кун?

3. Халĕ миçемĕш уйăх?

4. Чăваш алфавитĕнче *Б* сас палли миçемĕш вырăнта?

**IV. Тĕрлĕ пĕлĕве системăлани.**

***1. Ваттисен сăмахĕсемпе ĕçлесси.*** «Хуравне тепĕр сĕтел çинче шыра» вăйă.

Пĕр сĕтел çинче ваттисен сăмахĕсен пĕрремĕш пайĕ, тепĕр сĕтел çинче – вĕçĕ. Ачасен вĕсене тупса пуçтармалла. Вăйă тĕллевĕ: хăш ушкăн маларах пуçтараять. Экран çинче таймер ĕçлет. Ĕçе пурнăçламалли вăхăт – 3 минут.

Ваттисен сăмахĕсем:

1. Тăван çĕр-шыв – анне, ют çĕр-шыв – ама çури.
2. Ашшĕ-амăш пиллĕхĕ вутра та çунмасть, шывра та путмасть.
3. Анне – пурнăç пуçламăшĕ, кун-çул никĕсĕ, унăн вĕççĕр тĕрекĕ.
4. Анне – халăхăн шанчăкĕ, чысĕ, мухтавĕ.
5. Аттепе анне, Тăван çĕр-шыв пурри – телей!

***2. Клоуз тест мелĕпе çыру ĕçĕ йĕркелени.***

Малтан вĕрентекен клоуз тест мĕне пĕлтернине ăнлантарса парать, ĕçе еплерех пурнăçламаллине кăтартать. Фрейер модулĕпе усă курса ачасем клоуз тестпа еплерех ĕçлемеллине çирĕплетеççĕ. А 4 хута тăватă пая пайласа çыраççĕ: пĕрремĕш пайĕнче – определени, иккĕмĕшĕнче – характеристика, виççĕмĕшĕнче – хирĕçле тĕслĕх, тăваттăмĕшĕнче – тĕслĕх. Экран çинче таймер ĕçлет. Ĕçе пурнăçламалли вăхăт – 5 минут.

***3. Сиктерсе хăварнă сăмахсене кĕртсе лартса текст йĕркелени.*** (*Ĕçе пурнăçламалли вăхăт – 10 минут.)*

Пурнăçланă ĕç тĕслĕхĕ:

**Мĕн-ши вăл Тăван çĕр-шыв?**

Ман шутпа, Тăван ***çĕр-шыв*** вăл – тăван хула, тăван урам, тăван шкул. Шупашкар – маншăн чи лайăх та чи илемлĕ ***хула***. Хусанта та ***пулнă*** эпĕ аттепе, Мускавра та. ***Вĕсем*** те илемлĕ, вĕсем те таса. Анчах та мана Шупашкар ***ытларах*** килĕшет. Мĕншĕн-ши ***çапла***? Мĕншĕн тесен эпĕ кунта ***çуралнă***. Шупашкар – ***манăн*** тăван хула.

Мĕн-ши ***вăл*** Тăван çĕр-шыв? Тăван çĕр-шыв вăл – манăн ***юратнă*** çемье. Манăн çемье вăл – аттепе ***анне***, асаттепе асанне, кукамайпа кукаçи, шăллăмпа йăмăк.

Эпĕ пысăк та туслă çемьере, хăтлă та ăшă ***хваттерте*** пурăнатăп. Маншăн пирĕн хваттер – чи хаклă ***кĕтес***. ***Çак*** хаклă кĕтес те, ман шутпа, Тăван çĕр-шыв.

Эпĕ çĕнĕ те пысăк шкулта ***вĕренетĕп***. Кунта манăн юратнă учительсем ĕçлеççĕ, манăн çывăх ***туссем*** вĕренеççĕ. Маншăн хамăн ***шкул*** – чи аван шкул. Вăл ***та*** Тăван çĕр-шыв.

Çулла эпĕ асаттепе асанне ***патĕнче*** пурăнатăп. Уйра çарран чупатăп, ***пĕвере*** шыва кĕретĕп, вăрмана çӳретĕп. Кашни кун ***хамăн*** сывлăха çирĕплететĕп. Маншăн асаттепе ***асанне*** ялĕ те – Тăван çĕр-шыв.

Пĕр сăмахпа, манăн Тăван çĕр-шыв вăл – Чăваш Ен тата ***Раççей.***

***3. Ушкăнпа ĕçлени. Пĕр-пĕрне тĕрĕслени.***

Партăсем çинче Чăваш Республикин картти выртать. Ачасен пĕр-пĕрне тĕл пулăва чĕнмелле. Кам хăш районта тĕл пулассине кура ачасем ушкăнсем çине пайланаççĕ. Пĕр-пĕрин ĕçĕсене тĕрĕслеççĕ, мĕншĕн ку е вăл варианта суйласа илнине ĕнентереççĕ. Хуравĕсем экран çине тухаççĕ.

***4. Грамматика материалĕ.***

**V. Урока пĕтĕмлетни.**

***1 .Фрейер мелĕпе «Мĕн-ши вăл Тăванçĕр-шыв?» ыйтăва хуравлани.***

Парта çинче А 4 хут выртать. Ăна тăвата пая пайланă. Варринче тĕп ыйту: «Мĕн-ши вăл Тăван çĕр-шыв?» Кашни ача хăйне уйăрса панă кĕтесре çак ыйтăвăн хуравне çырать. Ĕçе пурнăçламалли вăхăт – 1 минут. Вăхăт иртсен ушкăнсем вырăнсемпе ылмашăнаççĕ. Хăйсен шухăшĕсене «+» е «–» лартса палăртаççĕ, мĕншĕн çапла тунине сасăпа каласа ăнлантараççĕ.

***2. Урокра мĕн çĕннине пĕлнине «Виççĕ–иккĕ–пĕрре» мелпе палăртни.***

***«3»*** – паянхи урокри чи интереслĕ самант.

***«2»*** – паянхи урокăн 2 элементне ытти уроксенче те курма кăмăл туни.

***«1»*** – татса паман ыйту.

***3. Учитель сăмахĕ. Сăвă йĕркисене пăхмасăр калани.***

В ĕ р е н т е к е н. Юратнă вĕренекенсем! Хамăрăн урока çак йĕркесемпе пĕтĕмлетес килет:

Тăван çĕр-шыв вăл пирĕн –
Çуралнă кил, умри йăмра.
Тăван çĕр-шыв вăл пирĕн –
Хитре янран кĕсле-тăмра.

Тăван çĕр-шыв вăл пирĕн –
Кил-çурт паран чунри хĕлхем.
Тăван çĕр-шыв вăл пирĕн –

Хурҫа татан тӑван чӗлхе.

Тӑван ҫӗр-шыв вӑл пирӗн –

Пӗрре анчах – пӗлер хакне.

Тӑван ҫӗр-шыв вӑл пирӗн –

Асран кайми атте-анне!

***4. Ачасен пӗлӗвне хакласси.***

**V. Киле ӗҫ пани.**

Виҫӗ ӗҫрен пӗрне суйласа илме юрать: Тӑван ҫӗр-шыв ҫинчен юрӑ ҫаврӑмӗсем тупса килмелле; сӑвӑ е ҫыхӑнуллӑ текст ҫырмалла.